# Çулталăкри чи вуланакан кĕнекесем

**«Литературăллă Чăваш Ен: çулталăкри чи вуланакан кĕнеке» республика конкурсне ирттересси йăлана кĕчĕ. Тĕллевĕ те унăн яланхиех – çынсене кĕнеке вулама илентересси тата Чăваш Республикинчи çыравçăсен чи аван хайлавĕсене халăх хушшине сарасси.**



Конкурса пĕтĕмĕшле чăвашла тата вырăсла çырнă 123 кĕнеке хутшăннă. Вĕсене халăх еплерех юратнине ыйтса пĕлес тĕллевпе 38 пин те 324 çынпа калаçнă. Ку ĕçе 17 районтан тата хуласенчен 74 вулавăша явăçтарнă.

Кăçал апрелĕн 25-мĕшĕнче Чăваш чĕлхи кунĕнче Наци вулавăшĕнче çĕнтерӳçĕсене чысларĕç. Вĕсене филологи ăслăлăхĕсен тухтăрĕ Юрий Артемьев ертсе пыракан сумлă жюри палăртнă.

Чăваш Ен культура министерствинчи профессилле ӳнерпе вĕренӳ тата халăх пултарулăхĕн пайĕн пуçлăхĕ Инна Ильина çыравçăсен ячĕпе нумай ăшă сăмах каларĕ.

«Чăваш чĕлхипе çырнă чи вуланакан прозăлла хайлав» номинацире Арсений Тарасов кăларнă «Вĕлтĕртетсе вĕçет сарă çулçă» калавсен пуххи çĕнтернĕ, вырăс чĕлхипе – «Тринадцатое полнолуние» калавсен пуххи, авторĕ – Андрей Растворцев.

Ача-пăча кĕнекисен номинацийĕнче: вырăс чĕлхипе кăларнисен хушшинче Вячеслав Рафиновăн «Мамины, бабушкины и мои сказки: 1,2 кн.» мала тухнă, чăваш чĕлхипе – «Кĕлпук мучи юптаратъ» (Галина Вастрюкова журналист пухса хатĕрленĕ).

Поэзи жанрĕпе çырнă хайлавсем хушшинче çĕнтерӳçĕсене палăртман.

«Чувашский рассказ. Т.1: Дети леса» куçарусен пуххине хатĕрленĕ Борис Чиндыкова ятарлă дипломпа чысланă. Республика центрĕнчен чи аякра вырнаçнă районсенче вулакансемпе тĕлпулсем йĕркеленĕ Ангелина Павловская çыравçă чăваш кĕнекине халăх хушшине сарнăшăн паракан ятарлă диплома тивĕçнĕ.

Кĕнеке юратакансем хушшинче «Вулассипе малта пыракан» номинацире мала тухнисене те (15 çул тултарман ачасем, 15-30 çулхисем, 30 çулхисемпе аслисем) асăнчĕç.

**Галина СОЛОВЬЕВА,**
**Наци вулавăшĕнчи «Чăваш кĕнеки» центр ертӳçи.**

Шупашкар хули.